**ЕРЭ –2023**

# 2024 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента сочинени çырма хатĕрлесси

*Егорова А.С., Чăваш Республикин вĕренӳ институтĕн чăваш чĕлхипе литературин кафедрин доценчĕ*

# *Экзамен ĕçĕн 3-мĕш пайĕ*

***Сĕннĕ 3 темăран пĕрне суйласа илсе калăпăшĕ енчен пысăках мар ăслав сочиненийĕ хайламалла.***

***Сочинени текстне хуравсен бланкĕ çине çырмалла.***

***Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 9.1, 9.2 е 9.3.***

# *Вуламалли текст*

**(1)Хĕвел, сывлăш, шыв тата çĕр – этемлĕх сăпки. (2)Этемпе çут çанталăк ĕмĕрсем хушши килĕшӳре пурăннă. (3)Мăн асаттесемпе асаннесем çакна питĕ лайăх ăнланнă. (4)Этем çут çанталăкран вăй-хăват илет, çавăнпа чăвашсем ăна пуç çапсах хисепленĕ. (5)«Эпир çĕртен пулнă, çĕрех пулатпăр», – теççĕ халĕ те.**

**(6)Юлашки вăхăтра этемлĕхе экологин çивĕч ыйтăвĕсем канăç памаççĕ. (7)Хими им-çамĕпе çĕре-шыва варалани, фабрика-заводсен тĕтĕмĕ атмосферăна сиенлени тата çĕр эрозийĕ пирки пурте пĕлетпĕр. (8)Шел пулин те, çăл куççемпе юхан шывсем типсе пыраççĕ, вăрмансене касса пĕтереççĕ, тулăхлă тăпра сийĕ арканать, чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕк йышĕ чакать.**

**(9)Пирĕн кашнин тăван çут çанталăка куç шăрçи пек юратса, упраса пурăнмалла. (10)Çут çанталăкра пурте чĕрĕ, пурте хаклă. (11)Пулла – таса шыв, вĕçен кайăка – сывлăш, чĕр чуна – улăх-çаран, вăрман кирлĕ. (12)Апла пулсан, юхан шывсене, кӳлĕ-пĕвене, вăрмансене, улăх-çарана таса тытмалла. (13)Тăван çĕрĕн илемне, тасалăхне сыхласси кашни çыннăн чун тĕпĕнче анчах мар, ĕçĕнче те пулмалла. (14)Çут çанталăка упрасси – кашни çын тивĕçĕ.** ***(Александр Петров* çырни тăрăх.)***

****Александр Петров (1990) – чăваш журналисчĕ.***

# 9.1.

***«Этем çут çанталăкран вăй-хăват илет»*** *темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.*
*Хăвăр шухăшăра икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) ĕнентерĕр: пĕр тĕслĕхне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр.*

## 9.1-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ (С 1)

| Ăслав сочинение хакламалли критерисем | Балсем |
|---|---|
| **Ача çырнă ĕç сĕннĕ темăпа тӳр килни** | |
| Сочинени содержанийĕ сĕннĕ темăпа тӳр килет. | 2 |
| Сочинени содержанийĕ сĕннĕ темăпа тӳр килет, анчах çырнă текстра темăран пăрăннă 1 вырăн пур. | 1 |
| Сочинени панă темăпа тӳр килмест, е ача ĕçĕнче темăран пăрăннă 2 е ытларах вырăн пур. | 0 |

# 9.1-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ (С 2)

| Сочинени содержанийĕ | |
|---|---|
| **Шкул ачин шухăшĕ палăрни** | |
| Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать. | 2 |
| Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартаймасть. | 1 |
| Вуланă тата итленĕ текстсем пирки шкул ачи хăй шухăшне каламасть е хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырса çырлахать. | 0 |

# 9.1-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ (С 3)

| Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсне тӳр килни | |
|---|---|
| Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет, шухăша çирĕплетме 2 (пĕр тĕслĕхне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илнĕ) аргументпа усă курнă. | **2** |
| Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет, анчах 1 аргументпа кăна усă курнă. | **1** |
| Ăслава пăхăнман текст хайланă. | **0** |

# 9.1-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ(С 4)

| | |
|---|---|
| **Ăслав сочиненине пуплев енчен йĕркелени** | |
| **Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни** | |
| Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, логика йăнăшĕсем çук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук. | 2 |
| Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă.. | 1 |
| Ĕçре шухăш çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă | 0 |

# 9.1-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ (С 5)

| Ăслав сочиненине пуплев енчен йĕркелени | |
|---|---|
| **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса памашкăн шкул ачи йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕсемпе усă курнă. | 2 |
| Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курни сисĕнет. | 1 |
| Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курнă. | 0 |

# 9.2.

*Вуланӑ текстра палӑртнӑ* ***«Ҫут ҫанталӑка упрасси – кашни ҫын тивӗҫӗ»*** *шухӑша уҫса парса калӑпӑшӗпе пысӑках мар (70 сӑмахран кая ан пултӑр) ӑслав хайлавӗ ҫырӑр.*
*Хӑвӑр шухӑшӑра вуланӑ текстри икӗ тӗслӗхпе (аргументпа) ӗнентерӗр.*

## 9.2-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ (С 1)

| Ăслав сочинение хакламалли критерисем | Балсем |
|---|---|
| **Вуланă текстра палăртнă шухăша уçса пани** | |
| Вуланă текстра палăртнă шухăша тĕрĕс уçса панă. | 2 |
| Вуланă текстра палăртнă шухăша пĕтĕмĕшле тĕрĕс уçса панă, анчах çырнă текстра темăран пăрăннă 1 вырăн пур. | 1 |
| Вуланă текстра палăртнă шухăша тĕрĕс уçса паман, е çырнă текстра темăран пăрăннă 2 е ытларах вырăн пур. | 0 |

# 9.2-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ (С 2)

| Сочинени содержанийĕ | |
| --- | --- |
| **Шкул ачин шухăшĕ палăрни** | |
| Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать. | 2 |
| Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартаймасть. | 1 |
| Вуланă тата итленĕ текстсем пирки шкул ачи хăй шухăшне каламасть е хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырса çырлахать. | 0 |

# 9.2-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ (С 3)

| **Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсне тӳр килни** | |
|---|---|
| Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет: текст тĕп шухăша (тезиса) пăхăнать, ку шухăша çирĕплетме вуланă текстран илнĕ 2 аргументпа усă курнă. | **2** |
| Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет, анчах 1 аргументпа кăна усă курнă. | **1** |
| Ăслава пăхăнман текст хайланă. | **0** |

# 9.2-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ(С 4)

| Ăслав сочиненине пуплев енчен йĕркелени | |
|---|---|
| **Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни** | |
| Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, логика йăнăшĕсем çук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук. | 2 |
| Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă.. | 1 |
| Ĕçре шухăш çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă | 0 |

# 9.2-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ (С 5)

| Ăслав сочиненине пуплев енчен йĕркелени | |
|---|---|
| **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса памашкăн шкул ачи йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕсемпе уса курнă. | 2 |
| Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр уса курни сисĕнет. | 1 |
| Сăмах çÿпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр уса курнă. | 0 |

# 9.3.

***Çут çанталăк*** *тенине Эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр.* ***«Мĕн вăл çут çанталăк?»*** *темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тезис вырăнне Хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) усă курăр: пĕр тĕслĕхне вуланă текстран, теприне Хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр.*

# 9.3-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ (С 1)

| Ăслав сочинение хакламалли критерисем | Балсем |
|---|---|
| **Сăмах пĕлтерĕшне ăнлантарса пани** | |
| Ача сăмахăн определенине çырнă, пĕлтерĕшне ăнлантарса панă. | 2 |
| Ача сăмахăн определенине çырнă, анчах пĕлтерĕшне ăнлантарса паман. | 1 |
| Ача сăмахăн определенине тĕрĕс çырман е пĕлтерĕшне ăнлантарса паман. | 0 |

# 9.3-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ (С 2)

| Сочинени содержанийĕ | |
|---|---|
| **Шкул ачин шухăшĕ палăрни** | |
| Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать. | 2 |
| Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартаймасть. | 1 |
| Вуланă тата итленĕ текстсем пирки шкул ачи хăй шухăшне каламасть е хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырса çырлахать. | 0 |

# 9.3-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ (С 3)

| Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсне тÿр килни | |
|---|---|
| Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тÿр килет: текст тĕп шухăша (тезиса) пăхăнать, ку шухăша çирĕплетме 2 (пĕр тĕслĕхне вуланă текстран, теприне пурнăç опытĕнчен илнĕ) аргументпа усă курнă. | **2** |
| Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тÿр килет, анчах 1 аргументпа кăна усă курнă. | **1** |
| Ăслава пăхăнман текст хайланă. | **0** |

# 9.3-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ(С 4)

| Ăслав сочиненине пуплев енчен йĕркелени | |
|---|---|
| **Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни** | |
| Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, логика йăнăшĕсем çук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук. | 2 |
| Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă.. | 1 |
| Ĕçре шухăш çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă | 0 |

# 9.3-мĕш ĕçе çак критерисемпе хаклаççĕ (С 5)

| Ăслав сочиненине пуплев енчен йĕркелени | |
|---|---|
| **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса памашкăн шкул ачи йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕсемпе усă курнă. | 2 |
| Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курни сисĕнет. | 1 |
| Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курнă. | 0 |

# Асра тытăр!

| | |
|---|---|
| **Сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (С1–С5 критерисемпе)** | **10** |

***Сочиненире 1-мĕш (итленĕ) тата 2-мĕш (вуланă) текстсене тепĕр хут каласа панă е çырса илнĕ пулсан – кун пек ĕçе нуль балл лартса хаклаççĕ.***

*Тĕрĕс çырма пĕлнине изложенипе сочинени тăрăх иккĕшне те пăхса уйрăммăн хаклаççĕ.*

# Ăслав тытăмĕ

***Ăслав – япала е пулăм çинчен шухăшласа тунă пĕтĕмлетӳсен ярăмĕ.***

***(Мĕншĕн? )*** ***(çавăнпа)***

| | | |
|---|---|---|
| **Тезис** | **2 аргумент** | **Пĕтĕмлетӳ** |



# Ăслав схеми


Тезис
Мĕншĕн çавăн пек
Мĕншĕн тесен
1-мĕш аргумент
2-мĕш аргумент
Пĕтĕмлетсе мĕн калама пулать?
Пĕтĕмлетӳ

# Тезиса калăплани

**– *Çут çанталăк* тенине эсир мĕнле ăнланатăр? Çак сăмахăн определенине парăр (ăнлантару словарĕнчи пек пулмасан та пултарать).**

**Сочинение Эсир хăвăр панă определенирен пуçлама пултаратăр. Вăл шăпах Сирĕн тезис пулать те.**

# Сăмахпа (сăмах майлашăвĕпе) ĕçлетпĕр

Синонимсем
(чĕлхе тата пуплев)

Антонимсем

Эпитетсем
(…. мĕнле пулать?)

Фразеологизмсем, ваттисен сăмахсемпе каларăшсем

# Кластер çыратпăр

***Çут çанталăк***

***(Мĕн вăл?)***

# Кластер çыратпăр

*Çут çанталăк*

*(Мĕнле вăл?)*

# Кластер çыратпăр

***Çут çанталăк***
***(Мĕн тăвать вăл?)***

# Ваттисен сăмахĕсене шыратпăр

***Çут çанталăка упра, телейлĕ пулăн.***
***Вăрман пек пуянни çук, уй пек асли çук.***
***Йывăça лартма часах та, уссине курма часах мар.***
***Пĕр йывăç касрăн пулсан – вуннă ларт.***
***Çут çанталăк çути пурне те çитет.***
***Çут çанталăк – пирĕн кил, ăна упра тата сыхла.***
***Çут çанталăка упрасси – кашни çын тивĕçĕ.***
***Шыв пулмасан пурнăç çук.***
***Вăрман вăл – çут тĕнче.***
***Пусса ан сур, шывне ĕçме хăвнах тӳр килĕ.***
***Ӳсен-тăрана ан пĕтер, чĕр чунсене ан вĕлер.***
***Шыва, сывлăша, тăпрана ан варала.***

# Çут çанталăка сыхласси çинчен çырнă хайлавсене аса илетпĕр




*М. Кипек. «Кайăк тусĕ»*
*А. Емельянов. «Çырма Куçми»*
*Çемен Элкер. «Ешĕл хунав»*
*Ухсай Яккăвĕ. «Карлав аври касмашкăн кайрăм»*
*т.ыт.те*

# Шухăшлатпăр

***Çут çанталăк вăл – ….***
***Манăн  шухăшпа (эпĕ шухăшланă тăрăх ), … вăл – …***
***… тесе … калама пулать.***
***… вăл, манăн шухăшпа, ….***

***… тесе çавна калама пулать, кам …***

***… тесе … калама пулать.***

# Сочиненин тĕп пайĕ

**Аргументсене** сочиненин **тĕп пайĕнче** илсе памалла, тезисра хускатнă шухăша малалла аталантарса пымалла:

Сочиненин тĕп пайĕнче акă мĕн-мĕн пулмалла:

- ❖хускатнă ыйту çинчен текст авторĕ мĕн шухăшланине (автор позицине) палăртни;
- ❖каланă кашни шухăша ăнлантарни (комментари пани);
- ❖харпăр хăй шухăшне пурнăç опычĕ, обществăра тата тата илемлĕ литературăра тĕл пулакан тĕслĕхĕсем çине таянса палăртни *(ку шухăш текст авторĕн шухăшĕпе тÿр килмесен те пултарать)*.

# Аргумент мĕн вăл?

Аргумент – тезиса ĕнентерме пулăшакан ĕçсемпе пулăмсем, фактсем, тĕслĕхсем, ăнлантарнисем т.ыт.те.

Аргументсене экзаменра итленĕ тата вуланă текстсенчен илме юрать. Хăвăр курни-илтни, унччен вулани çине таянма та май пур.

# Ăславăн ĕнентерӳ мелĕсем

- кӳртĕм сăмахсем
- ыйтупа хурав пĕрлĕхĕ
- пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсем

# Сочиненири аргументсем

| | |
|---|---|
| **9.1.** | Вуланă тата итленĕ текстсенчен цитатăласа е предложени номерне кăтартса илнĕ пĕрер аргумент |
| **9.2.** | Текстран цитатăласа е предложени номерне кăтартса илнĕ икĕ аргумент |
| **9.3.** | Пĕри – вуланă текстран,<br>тепри – пурнăçран. |

# Аргументсене сочиненире мĕнле кăтартмалла?

| | |
|---|---|
| **Предложени номерне скобкăсăр кăтартни** | *..-мĕш предложенире шăпах çак шухăша уçса панă.* |
| **Предложени номерне скобкăра кăтартни** | *Этем çут çанталăкран вăй-хăват илет, çавăнпа чăвашсем ăна пуç çапсах хисепленĕ (4-мĕш предложени).* |
| **Предлжение номерне палăртмасăрах цитатăлани (чарăну паллисем çинчен манса каймалла мар)** | *«Пирĕн кашнин тăван çут çанталăка куç шăрçи пек юратса, упраса пурăнмалла», - тесе палăртать А. Петров.* |
| **Предложени номерне скобкăсăр кăтартни, цитатăн уйрăм сăмахĕсене кавычкăна илни** | *Çут çанталăк хăрушлăхра пулнине автор 6-8-мĕш предложенисенче çырса парать: «Хими им-çамĕпе çĕре-шыва варалани», «фабрика-заводсен тĕтĕмĕ атмосферăна сиенлени», «çăл куçсемпе юхан шывсем типсе пыраççĕ», «тулăхлă тăпра сийĕ арканать», «чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕк йышĕ чакать».* |

# *Асăрхăр!*

Ялан ***автор*** сăмахпа усă курасран ăна урăх сăмахпа ылмаштарăр:

- ✓***Публицист*** сăмахпа (публицистика стилĕпе çырнă текст пулсан);
- ✓***Писатель, çыравçă*** сăмахсемпе (илемлĕ стильпе çырнă текст пулсан);
- ✓***вăл*** местоименипе;
- ✓текст авторĕн ячĕпе тата хушамачĕпе.

# Асра тытăр!

Ăслав сочиненийĕсенче пысăк вырăн йышăнаççĕ:

- **Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисем**
- **Пăхăнуллă союзсем**

# Кўртĕм сăмахсемпе предложенисем

| | |
|---|---|
| **Шухăша пĕтĕмлетекеннисем** | Çапла вара, кĕскен каласан, пĕтĕмлетсе каласан, апла пулсан, эппин |
| **Шухăш çыхăнăвĕн йĕркине палăртаканнисем** | Пĕрремĕшĕнчен, иккĕмĕшĕнчен, виççĕмĕшĕнчен, пĕр енчен, тепĕр енчен, чăн малтан, юлашкинчен |
| **Шухăш камран е ăçтан тухнине палăртаканнисем** | Пирĕн шухăшпа, эпĕ шутланă тăрăх, тĕпчевçĕсен шухăшĕпе, автор шухăшĕпе, çыравçă палăртнă тăрăх |
| **Аргументлаканнисем** | Акă, тĕслĕхрен, сăмахран |

# Пăхăнуллă союзсем

| | |
|---|---|
| **Пирке** | ***мĕншĕн тесен (ма тесен), тесе*** |
| **Тĕллев** | ***тесе*** |
| **Тĕллевпе услови** | ***тесен*** |
| **Услови** | ***пулсан, енчен, эхер, ытах. тĕк*** |
| **Килешӳ** | ***пулсан та, пулин те, хуть*** |

# Аргументласа пăхар-ха…

***…çак предложенисем уçса параççĕ.***

***Тĕп шухăш … сăмахсенче***

***ятĕнче***

***çак предложенисенче***

***çак пайсенче***

***пытаранна.***

# Текстран аргумент илсе пӑхар-ха…

***А. Петров çырнӑ текстра ….***
***Каланине ӗнентерме …-мӗш предложение илсе пӑхатпӑр.***
***…-мӗш предложени …. шухӑша çирӗплетет.***
***Ку шухӑша … А. Петров текстӗнчи ..-мӗш предложенипе çӑмӑллӑнах ӗнетерме пулать.***
***Автор шухӑшӗпе, хӗвел, сывлӑш, шыв тата çӗр – этемлӗх сӑпки. Çыравçӑ палӑртнӑ тӑрӑх, юхан шывсене, кӳлӗ-пӗвене, вӑрмансене, улӑх-çарана таса тытмалла.***

# Пурнăçран аргумент илсе пăхар-ха…

Хамăр пурнăçра та эпир …. тĕслĕхсене сахал мар куратпăр. Сăмахран, …

… кунĕнче (шкулта, библиотекăра, музыка шкулĕнче) пире çавăн пекрех пулăм (ĕç, истори) çинчен каласа пачĕç.

Хамăн ачалăхран эпĕ çакăн пекрех ĕç çинчен аса илетĕп.

Унсăр пуçне, манан шухăш тĕрĕссине литература (обществознани, истори, физика, биологи, географи) учебникĕсенчи тĕслĕх те ĕнентерсе парать.

# Сочинени пĕтĕмлетĕвĕ

**Пĕтĕмлетӳ – аргументсем çине таянса тата тезиспа çыхăнтарса пĕтĕмлетни.**

***Çапла вара, …***
***Апла пулсан, …***
***Каланине пĕтĕмлетсе, … палăртмалла (палăртас килет).***
***… тесе шухăшлатăп.***
***…. шанас килет.***
***…. çакăн пек шухăшсем çуралчĕç.***

**Экзаменра ăнăçу сунатпăр!**